26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 ЯНВАРЬ 30 ВЫРСАРНИКУН 21(6516) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ПОПОВА

Балтика умӗнчи 2-мӗш фронтӑн ҫарӗсем, паян, январӗн 29-мӗшӗнче, кӗтмен ҫӗртен атакӑласа, НОВОСОКОЛЬНИКИ хулипе пысӑк чугун ҫул узелне — нимӗҫсен оборонин тӗреклетнӗ паха пунктне тытса илнӗ.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулине тытса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ЮШКЕВИЧ генерал-лейтенантӑн, КРОНИК генерал-майорӑн ҫарӗсем, артиллери генерал-лейтенанчӗн НИЧКОВАН, АРАКУШИНСКИЙ полковникӑн, ЗАЛИВАКИН подполковникӑн, РОГОВ подполковникӑн, КУЛЬЧИТСКИЙ майорӑн артиллерисчӗсем, ЕРЕЦКИЙ майорӑн, МЕРЗЛОВ майорӑн танкисчӗсем, ТРУШКИН подполковникӑн летчикӗсем, ЛЕЩЕВ полковникпа КОНДРАТЬЕВ майорӑн саперӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫитӗнӗве яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑсесене «НОВОСОКОЛЬНИЧЕСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, январӗн 29-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, НОВОСОКОЛЬНИКИ хулине тытса илнӗ хамӑрӑн паттӑр ҫарсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, НОВОСОКОЛЬНИКИ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене—вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ
И. СТАЛИН.

1944-мӗш ҫулхи январӗн 29-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ЯНВАРӖН 28-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Январӗн 28-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ГАТЧИНА хулинчен хӗвеланӑҫнерехре, кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра, наступлени туса пырса, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла ҫапӑҫса тытса илнӗ, ҫав шутра ВОРОНИНО, СТАРЫЕ МЕДУШИ, САВОЛЬЩИНА, СИНКОВИЦЫ, ГОЛУБОВИЦЫ, БЕГУНИЦЫ, АРТЮШКИНО, СМЕДОВО, ЧЕРЕНКОВИЦЫ, ХУДАНКИ, АРОКЮЛЬ, КНЯЖЕВО, ЛИСИНО, ХЛОПОВИЦЫ, ЗАПОЛЬЕ, ЛИМОЖА, ЧЕРНАЯ, СОСНИЦЫ, РЕПОЛКА, ТОЙВО, НИКОЛЬСКОЕ, КРИВОЕ КОЛЕНО, МЕНЬКОВО, КОБРИНО ятлӑ ялсене.

ВОЛХОВ фронтӗнчи ҫарсем вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн ЛЮБАНЬ хулипе паха чугун ҫул станцине тытса илнӗ. ЛЮБАНЬ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнелле, хӗвеланӑҫнелле тата кӑнтӑралла куҫса пырса, ПЕРИ, РАМБОЛОВО, МИНА, ЛИСИНО-КОРПУС, СИДОРОВО, УСАДИЩЕ, МЕЛЬНИЦА, ЛУСТОВКА, ГРИШКИНО, КАМЕНКА, БОЛОТНИЦА, ВАРВАРИНСКИЙ, КИРКОВО ятлӑ ялсене тата ПОМЕРАНЬЕ, ТРУБНИКОВ БОР, БАБИНО, ТОРФЯНОЕ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене тытса илнӗ.

НОВГОРОД хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем наступлени туса пынӑ, ЖЕСТЯНАЯ ГОРКА, РАГЛИЦЫ, МАРИНО, СКАЧЕЛИ, ОГУРКОВА, МЕЛКОВИЧИ, ЛЮБЕНЕЦ, ГОЛУБКОВО, КЛЕВЕНЕЦ, МАЛЫЕ УГОРОДЫ, СОСЕНКА, БОЛЬШИЕ УГОРОДЫ, ЗАРЕЧЬЕ, ИЛЬМЕНЬ, СТАРЫЙ ШИМСК ятлӑ ялсене тата ПЕРЕДОЛЬСКАЯ, КЧЕРА ятлӑ чугун ҫул станцийӗсене тытса илнӗ. Пирӗн ҫарсем БАТЕЦКАЯПА ДНО хушшинчи чугун ҫула татнӑ.

ВИННИЦАРАН хӗвелтухӑҫнерехре тата ХРИСТИНОВКАРАН ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен йышлӑ вӑйӗсен атакисене сире-сире янӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ, артиллерипе миномётсенчен персе тӑнӑ тата темиҫе вырӑнта тӗллӗк-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Январӗн 27-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 107 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 30 самолетне персе ӳкернӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Шоссе ҫулӗсен Управленийӗн шоссе ҫулӗсем тунӑ ҫӗрте уйрӑмӑнах палӑрнӑ работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Чӑваш АССР-чи шоссе ҫулӗсене срокчен туса пӗтернӗшӗн Шоссе ҫулӗсен Управленийӗн ҫав ӗҫре уйрӑмӑнах палӑрнӑ ҫак работникӗсене ЧАССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас:

1. Петр Игнатьевич **Бесчастныха**—строительствӑн 5-мӗш районӗн начальникне.
2. Алексей Яковлевич **Бондарева.**
3. Михаил Самарьевич **Гурарис**—Управлени начальникне.
4. Борис Яковлевич **Гохмана** — Управленин производствӑпа техника отделӗн начальникне.
5. Казимир Флорианович **Мацкевича**—Управленин главнӑй механикне.
6. Андрей Антонович **Нечитайлока**—строительствӑн 7-мӗш районӗн начальникне.
7. Гдаль Эйзерович **Сундуковские**—строительствӑн 4-мӗш районӗн главнӑй инженерне.
8. Алексей Иванович **Свириденкова**—строительствӑн 6-мӗш районӗн начальникне.
9. Дмитрий Иванович **Флерова** — Автотранспорт конторин начальникне.
10. Регина Иосифовна **Фельдмана**—Управленин план отделӗн начальникне.
11. Александр Алексеевич **Чеснокова**—Управленин финанс отделӗн начальникне.
12. Эммануил Львович **Раскина**—Управленин политотдел начальникне.
13. Георгий Семенович **Мурашова**—Управлени начальникӗн заместительне.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗн Заместителӗ **Д. МИТЬКОВ.**

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ **А. ИЗМАЙЛОВ.**

Шупашкар хули, 1944 ҫулхи январӗн 28-мӗшӗ.

Вырӑс ҫӗрӗшӗн кӗрешекенсем

Политика литературин государство издательствинче «Вырӑс ҫӗрӗшӗн кӗрешекенсем» ятлӑ серипе ҫакӑн пек брошюрӑсем массӑллӑ тиражпа кӑларнӑ: В. Данилевский профессорӑн «Дмитрий Донской», «Александр Невский», «Дмитрий Пожарский», «Кузьма Минин» брошюрисене, Н. Коротков профессорӑн «Кутузов» ятлӑ кӗнекине. Унсӑр пуҫне Мавродин профессорӑн «Брусилов» ятлӑ кӗнекине пичетлесе кӑларнӑ.

Ҫав брошюрӑсем вырӑссен аслӑ полководецӗсен пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен тӗплӗн каласа параҫҫӗ. Вӗсем вулакан пирӗн халӑхӑн никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн тата тӑван ҫӗршыв ирӗклӗхӗшӗн кӗрешнин мухтава тивӗҫлӗ страницисене тепӗр хут аса илтереҫҫӗ. (ТАСС)

ССР Союзӗн 1-мӗш созыври Верховный Совечӗн Х-мӗш Сессийӗ

Союз Совечӗн тата Национальноҫсен Совечӗн ларӑвӗсем ҫинчен, Союз Совечӗпе Национальноҫсен Совечӗн 1944 ҫулхи январӗн 28-мӗшӗнчи пӗрлехи ларӑвӗ ҫинчен

Информациллӗ пӗлтерӳ

Ӗнер, январӗн 28-мӗшӗнче, кӑнтӑрла 2 сехетре, СССР Верховный Совечӗн ларӑвӗсем пулакан залра, Кремльре, Союз Совечӗн Х-мӗш Сессийӗ уҫӑлнӑ.

Сесси Союз Совечӗн Председателӗ депутат **А. А. Андреев** уҫать.

Андреев юлташ сессисем хушшинчи вӑхӑтра уйрӑм суйлав округӗсем тӑрӑх 42 депутат суйлани ҫинчен пӗлтерет. **Андреев** юлташ Союз Совечӗн Мандат Комиссийӗн докладне тума **А. С. Щербаков** депутата сӑмах парать.

Щербаков юлташ хӑйӗн докладӗнче Союз Совечӗн Мандат Комиссийӗн постановленине вуласа парать. Постановленире уйрӑм суйлав округӗсем тӑрӑх суйланӑ Союз Совечӗн депутачӗсен полномочийӗсене тӗрӗслесе тухнин результачӗсем ҫинчен каланӑ.

Союз Совечӗ, **П. И. Селезнев** депутат сӗннипе, Мандат Комиссийӗн доклачӗ тӑрӑх ҫакӑн пек постановлени йышӑнать:

«Мандат Комиссийӗн Союз Советне пур 42 уйрӑм суйлав округӗсем тӑрӑх суйланӑ депутатсен полномочийӗсене те тӗрӗс тесе йышӑннӑ докладне ҫирӗплетес».

Кун хыҫҫӑн Союз Совечӗ Сесси кун йӗркине ҫирӗплетме тытӑнать.

Андреев юлташ Союз Совечӗн Х-мӗш Сессине пӑхса тухма тӑратнӑ ыйтусене йӗркерен каласа тухать.

Г. П. Пальцев депутат Союз Советӗнче пӑхса тухма тӑратнӑ ыйтусене Союз Совечӗн Х-мӗш Сессин кун йӗркине кӗртме сӗнӳ парать.

Союз Совечӗ пӗр саслӑ пулса ҫакӑн пек кун йӗрки ҫирӗплетет:

1. ССР Союзӗн 1944 ҫулхи государство бюджетне ҫирӗплетесси тата ССР Союзӗн 1940-мӗш, 1941-мӗш, 1942-мӗш ҫулсенчи государство бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен тунӑ отчета ҫирӗплетесси.
2. Оборона Халӑх Комиссариатне тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариатне пӗтӗм Союзлӑ комиссариатсенчен Союзлӑ республикӑсен Халӑх Комиссариачӗсем тӑвасси ҫинчен.
3. СССР Верховный Совет Президиум Председателӗн пӗрремӗш заместителӗ ҫинчен.

Н. И. Чмутов депутат сӗннипе, Союз Совечӗ ҫакӑн пек постановлени йышӑнать: ССР Союзӗн 1944 ҫулхи государство бюджечӗ ҫинчен тумалли доклада Союз Совечӗпе Национальноҫсен Совечӗн пӗрлехи ларӑвӗнче итлес, Бюджет комиссийӗсен содоклачӗсене, государство бюджетне сӳтсе явассине тата ӑна ҫирӗплетессине Палатӑсен уйрӑм ларӑвӗсенче туса ирттерес.

Ҫакӑнпа Союз Совечӗн Х-мӗш Сессийӗн пӗрремӗш ларӑвӗ хупӑнать.

* * *

Кӑнтӑрла 4 сехетре Национальноҫсен Совечӗн Х-мӗш Сессийӗ уҫӑлнӑ.

Сесси Национальноҫсен Совечӗн Председателӗ депутат **Н. М. Шверник** уҫать.

Шверник юлташ сессисем хушшинчи вӑхӑтра уйрӑм суйлав округӗсем тӑрӑх 25 депутат суйлани ҫинчен пӗлтерет. **Шверник** юлташ Национальноҫсен Совечӗн Мандат Комиссийӗн докладне тума **М. Ф. Шкирятов** депутата сӑмах парать.

Шкирятов юлташ хӑйӗн докладӗнче Национальноҫсен Совечӗн Мандат Комиссийӗн постановленине вуласа парать. Постановленире уйрӑм суйлав округӗсем тӑрӑх суйланӑ Национальноҫсен Совечӗн депутачӗсен полномочийӗсене тӗрӗслесе тухнин результачӗсем ҫинчен каланӑ.

Национальноҫсен Совечӗ, **К. С. Алабян** депутат сӗннипе, Мандат Комиссийӗн доклачӗ тӑрӑх ҫакӑн пек постановлени йышӑнать:

«Мандат Комиссийӗн Национальноҫсен Советне пур 25 уйрӑм суйлав округӗсем тӑрӑх суйланӑ депутатсен полномочийӗсене те тӗрӗс тесе йышӑннӑ докладне ҫирӗплетес».

Кун хыҫҫӑн Национальноҫсен Совечӗ Сессин кун йӗркине ҫирӗплетме тытӑнать.

Шверник юлташ Национальноҫсен Совечӗн Х-мӗш Сессине пӑхса тухма тӑратнӑ ыйтусене каласа пӗлтерет.

Национальноҫсен Совечӗ, **У. Гаджибеков** депутат сӗннипе, Х-мӗш Сессин ҫакӑн пек кун йӗркине ҫирӗплетет:

1. ССР Союзӗн 1944 ҫулхи государство бюджетне ҫирӗплетесси тата ССР Союзӗн 1940-мӗш, 1941-мӗш, 1942-мӗш ҫулсенчи государство бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен тунӑ отчета ҫирӗплетесси.
2. Оборона Халӑх Комиссариатне тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариатне пӗтӗм Союзлӑ комиссариатсенчен Союзлӑ республикӑсен Халӑх Комиссариачӗсем тӑвасси ҫинчен.
3. СССР Верховный Совет Президиум Председателӗн пӗрремӗш заместителӗ ҫинчен.

М. М. Фонин депутат сӗннипе, Национальноҫсен Совечӗ ҫакӑн пек постановлени йышӑнать: ССР Союзӗн 1944 ҫулхи государство бюджечӗ ҫинчен тумалли доклада Палатӑсен пӗрлехи ларӑвӗнче итлес, Бюджет комиссийӗсен содоклачӗсене, государство бюджетне сӳтсе явассине тата ӑна ҫирӗплетессине Палатӑсен уйрӑм ларӑвӗсенче туса ирттерес.

Ҫакӑнпа Национальноҫсен Совечӗн Х Сессин пӗрремӗш ларӑвӗ хупӑнать.

* * *

Каҫхине 7 сехетре Союз Совечӗпе Национальноҫсен Совечӗн пӗрлехи ларӑвӗ пулса иртнӗ.

СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ **И. В. Сталин** юлташ, СССР Верховный Совет Президиумӗн членӗсем тата ССР Союзӗн Правительство членӗсем ложӑсене тухнине Сессисри сынсем тӑвӑллӑ, нумайччен чарӑнми оваци туса кӗтсе илеҫҫӗ.

Председатель сӗтелӗ умӗнче: Союз Совечӗн Председателӗ **А. А. Андреев** юлташ, Национальноҫсен Совечӗн Председателӗ **Н. М. Шверник** юлташ тата вӗсен заместителӗсем: **Т. Д. Лысенко, У. Юсупов, Ч. А. Асланова, М. В. Кулагин** юлташсем.

Председатель пулса **Н. М. Шверник** юлташ ертсе пырать.

СССР Верховный Совечӗн Х-мӗш Сессийӗн кун йӗркин пӗрремӗш пункчӗ тӑрӑх—ССР Союзӗн 1944 ҫулхи государство бюджечӗ ҫинчен тата 1940-мӗш, 1941-мӗш, 1942-мӗш ҫулсенчи государство бюджетне мӗнле пурнӑҫлани ҫинчен — СССР Финанс Халӑх Комиссарӗ **А. Г. Зверев** юлташ доклад тӑвать.

Зверев юлташӑн доклачӗ пӗтнӗ хыҫҫӑн, Председатель пулса ертсе пыракан **Шверник** юлташ Союз Совечӗпе Национальноҫсен Совечӗн пӗрремӗш пӗрлехи ларӑвне хупать.

ССР Союзӗн 1944 ҫулхи государство бюджечӗ тата ССР Союзӗн 1940, 1941, 1942 ҫулсенчи государство бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен

ССР Союзӗн Финанс Халӑх Комиссарӗ А. Г. ЗВЕРЕВ юлташ Союз Совечӗпе Национальноҫсен Совечӗн пӗрлехи ларӑвӗнче 1944 ҫулхи январӗн 28-мӗшӗнче тунӑ доклад)*

Депутат юлташсем! Пирӗн аслӑ Тӑван ҫӗршыври халӑхсем, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене аркатса тӑкас тесе, икӗ ҫул ҫурӑ ытла ӗнтӗ хӑйсен пӗтӗм вӑйӗсене хурса кӗрешеҫҫӗ.

Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар, генийлӗ полководец Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ ертсе пынипе, нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене ҫав тери хӑватлӑн, аркатмаллах пыра-пыра ҫапать, вӗсене Хӗвеланӑҫнелле аяккарах та аяккарах хӑваласа ярса, тӑшмана пӳҫӗпех ҫӗнтерес сехете кунсерен ҫывхартса пырать.

Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнтерӗвӗсем нумай миллионлӑ совет ҫыннисем фабрикӑсемпе заводсенче, шахтӑсемпе рудниксенче, транспортра, ялхуҫалӑхӗнче тата государство учрежденийӗсенче вӑя хӗрхенмесӗр хастарлӑн ӗҫленипе тачӑн ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Сталинла пятилеткӑсен ҫулӗсенче тунӑ пирӗн хӑватлӑ индустри Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫапӑҫури ҫитӗнӗвӗсен материаллӑ-техникӑллӑ никӗсӗ пулса тӑчӗ. Совет халӑхӗ, вӑрҫӑ хуҫалӑхне аталантарса ҫирӗплетсе пынипе пӗрлех, нимӗҫсем хуҫаланнӑ, халӗ вӗсенчен ирӗке кӑларнӑ районсенчи хуҫалӑха йӗркелес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем тӑвать.

Ылханлӑ тӑшмана хирӗҫ пыракан кӗрешӳре пирӗн ҫӗршыври халӑхсем умӗнче татах та хаяр ҫапӑҫусем тӑраҫҫӗ-ха. Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисен фронт ыйтнисене пурне те тивӗҫтерсе пыма татах та ытларах вӑй хурса ӗҫлемелле, государствӑн мӗнпур ресурсӗсене мобилизацилемелле.

Совет халӑхӗпе унӑн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарӗ, аслӑ Сталинӑн генийӗпе хавхаланса, хӑйӗн Тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗ, гитлерла захватчиксене тӗппи-йӗрӗпех аркатса тӑкӗ.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ эсир пӑхса тухса ҫирӗплетме тӑратнӑ 1944 ҫулхи государство бюджечӗ совет халӑхӗ тӑшмана ҫӗнтерес ӗмӗтпе пурӑннине палӑртса парать.

ССР Союзӗн 1940, 1941 тата 1942 ҫулсенчи государство бюджечӗ

Совет Союзӗн халӑх хуҫалӑхӗ мирлӗ строительство ҫулӗсенче аталанса пыни государство бюджетне ӳстермелли никӗс пулса тӑнӑ. ССР Союзӗн 1940 ҫулхи государство бюджетне доходсем енӗпе 180,2 миллиард тенкӗ чухлӗ, расходсем енӗпе 174,3 миллиард тенкӗ чухлӗ пурнӑҫа кӗртнӗ. 1939 ҫулхипе танлаштарсан, бюджетӑн дохочӗсем 24,2 миллиард тенкӗлӗх, урӑхла каласан, 15,5 процент чухлӗ ӳснӗ.

СССР Верховный Совечӗн VII-мӗш Сессийӗ ССР Союзӗн 1941 ҫулхи бюджетне доходсем енӗпе 216,8 миллиард тата расходсем енӗпе 216 миллиард тенкӗ чухлӗ ҫирӗплетнӗ. Ҫакӑ вӑл мирлӗ вӑхӑтра ҫӗршыври производительнӑй вӑйсене тата совет халӑхӗн культурине малалла ӳстерсе пыма май панӑ.

1941 ҫул варринче фашистла Германи Совет Союзӗ ҫине вӑрҫӑпа килсе тапӑннине пула, пирӗн халӑх хуҫалӑхне вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек тӗпрен урӑхлатса йӗркелемелле тата государство бюджетне, ӑна пурнӑҫа кӗртнӗ вӑхӑтрах, улшӑнусем кӗртмелле пулчӗ.

Вӑрҫӑ ӗҫӗсем ҫав тери анлӑн сарӑлса пыни, кун чухнехи ҫар техника тӗлӗшӗнчен вӑйлӑн хӗҫпӑшалланни материаллӑ пурлӑхсене тата укҫа-тенкӗне нумай расходлама хушаҫҫӗ. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ 1942 ҫулта государство бюджечӗ тӑрӑх вӑрҫӑ расхочӗсем 108,4 миллиард тенкӗне ҫитнӗ, 1943 ҫулта, малтанласа шута илнӗ тӑрӑх, 124,7 миллиард тенкӗне ҫитсе ӳснӗ. Ҫакӑнпа пӗрлех государство бюджетӗнчен халӑх хуҫалӑхӗн отраслӗсене вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек урӑхлатса йӗркелес, промышленноҫа хӗвелтухӑҫӗнчи районсене куҫарас тата вӑрҫӑшӑн ӗҫлекен ҫӗнӗ предприятисем тӑвас тӗлӗшпе нумай укҫа-тенкӗ расходламалла пулнӑ. Государство бюджетӗнче ҫар ҫыннисене тата вӗсен ҫемйисене пенсисемпе пособисем тӳлес енӗпе тухакан расходсем те ӳснӗ.

Вӑрҫӑ пирӗн государствӑн экономикипе финанс хуҫалӑхне тӗпренех тӗрӗслесе тухрӗ. Вӑрҫӑ тапхӑрӗ ҫав тӗрӗслӗве эпир чыслӑн тӳссе ирттерни ҫинчен каласа парать.

Росси экономикӑпа финанс тӗлӗшӗнчен 1914—1917 ҫулсенчи вӑрҫӑ тапхӑрӗнче мӗнле пулнине аса илер-ха. Российӑн вӑрҫӑ расхочӗсем, ССР Союзӗ хальхи вӑрҫӑра тӳсекен расходсенчен нумай сахал пулнӑ пулин те, Российӑн экономикӑпа финанс хуҫалӑхӗ вӑрҫӑ пӗтнӗ тӗле пачах та арканса каясси патне ҫитсе тӑнӑ.

Совет халӑхӗ нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ туса пыракан отечественнӑй вӑрҫӑ халӑх хуҫалӑхӗпе финанс хуҫалӑхӗ умне 1914—1917 ҫулсенчи вӑрҫӑран нумай пысӑкрах ыйтусем лартрӗ. Фашистла оккупантсем пирӗн предприятисене, транспорта, колхозсемпе совхозсене пысӑк сиен кӳнӗ пулин те, Совет государстви вӑрҫӑпа ҫыхӑнса тӑракан расходсене витме кирлӗ таран ресурссем тупма пултарчӗ. Пирӗн халӑх хуҫалӑхӗн вӑйӗсем вӑрҫӑ ҫулӗсенче татах та ытларах ӳсе ҫирӗпленчӗҫ. Ҫакӑнта совет хуҫалӑхӗн системи малта тӑни, пирӗн государство хӑвачӗ, Совет Союзӗнчи халӑхсен туслӑхӗ палӑрчӗ. Ҫакӑнта ӗнтӗ совет ҫыннисен хастар та паттӑр ӗҫӗ, партипе правительство аслӑ

(*Юлашши 2-мӗш страницӑра*).

*) Кӗскетнӗ стенограмма тӑрӑх пичетленет.

ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн X-мĕш Сессийĕ

ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссарĕ А. Г. ЗВЕРЕВ юлташ Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче 1944 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче тунă доклад

Юлашки

Сталин ертсе пынипе тунă организаторла пысăк ĕçсем палăрчĕç. (**Тăваллăн ала çупаççĕ**).

Вăрçă расхочĕсене витмелли тĕп çăлкуçĕ государство предприятийĕсемпе организацийĕсем пухакан доходсем пулса тăраççĕ. Çакна шута илес пулать: экономика тĕлĕшĕнчен питех те кирлĕ районсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсем вăхăтлăха оккупацилени, куллен кирлĕ таварсем кăларакан предприятисен пĕр пайне вăрçă продукцийĕ кăлармалла туса йĕркелени бюджета кĕрекен кирлĕ доходсен çăлкуçне—оборотран илекен налога чылай чакарнă.

Пирĕн промышленность, ялхуçалăхĕ, транспорт вăрçă çулĕсенче пысăк ӳсĕмсем турĕç.

Производствăри йĕркелĕхе лайăхлатни пирĕн предприятисенче ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерме тата продукци хакне йӳнетме май пачĕ. 1942 çулта государство промышленноçĕнче продукцин хăйне ларакан хакĕ 9,2 процент йӳнелнĕ. Промышленноçăн 1943 çулхи малтанласа тунă итогĕсем продукцин хăйне ларакан хакĕ тата 5 процент йӳнелни çинчен калаççĕ.

Уйрăмăнах вăрçă промышленноçĕ пысăк ӳсĕмсем турĕ. Вăрçăра кирлĕ продукцин хакĕ йӳнелни государствăна 35 миллиард тенкĕне çити укçа пачĕ. Çав вăхăтрах государство предприятийĕсемпе организацийĕсем бюджета паракан тупăш, вăрçăччен вăхăтпа танлаштарсан, питех те сахал чакнă. 1940 çулта тупăшсем бюджета 21,7 миллиард тенкĕ кĕнĕ, 1943 çулта вара бюджета кĕнĕ тупăшсем 19,9 миллиард тенкĕ шутланаççĕ.

Калас пулать, вăрçă вăхăтĕнче бюджета, тупăшсемсĕр пуçне, промышленноçăн суту-илӳпе коопераци организацийĕсен ытлашши ресурсĕсене тата банксенчи нумай вăхăтлăха хывнă укçа-тенкĕне пурĕ 20 миллиард тенкĕ ытла мобилизациленĕ.

Государство бюджечĕн дохочĕсенче халăхран пухăнакан укçа-тенкĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă пĕтĕм халăх вăрçи пулса тăни, ĕççыннисем хăйсен государствине нумай тĕрлĕ пулăшу панинче те уççăн курăнса тăрать.

Совет Союзĕнчи рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци пуçарнипе тунă Оборона фондне тата Хĕрлĕ Çар фондне 1941—1943 çулсенче 13 миллиард тенкĕ таран укçа хывнă. Унсăр пуçне вăл фондсене нумай тĕрлĕ хаклă япаласем тата ялхуçалăх продукчĕсем хывнă.

Хамăрăн тăван çĕршыва хӳтĕлес ĕç валли хывнă пысăк парне вăл—ĕççыннисем государство заемĕсем тăрăх панă укçа-тенкĕ пулать. Вăрçă пынă вăхăтри икĕ çул çурă хушшинче халăх государство заемĕсем тата укçапа япаласен лотерейисем тăрăх 38,6 миллиард тенкĕ укçа хывнă.

Вăрçă вăхăтĕнче тунă военнăй налог тăрăх 33 миллиард тенкĕ укçа пухăннă.

ССР Союзĕн 1943 çулхи государство бюджетне, малтанласа шутланă тăрăх, пĕтĕмĕшпе илсен, доходсем енĕпе 104.6 процент, расходсем енĕпе 100,2 процент пурнăçланă.

Фронт интересĕсене тивĕçтерне çĕре бюджет тăрăх паракан укçа-тенкĕ ресурсĕсем çинчен каланă чухне, пирĕн союзниксем Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшалсем, материалсем тата апат-çимĕçсем тĕлĕшпе пулăшса тăни пысăк вырăн йышăнни çинчен те каласа хăвармалла.

ССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕ

Депутат юлташсем!

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ эсир çирĕплетме тăратнă 1944 çулхи государство бюджечĕ государствăн вăрçă расхочĕсене тивĕçтерме, нимĕç оккупанчĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ районсенче ишĕлтерсе пĕтернĕ хуçалăха тата социаллă-культураллă учрежденисене йĕркелес тĕлĕшпе тухакан расходсене витме тата Совет Союзĕн халăх хуçалăхĕпе халăхсен культурине малалла аталантарса пыма май парать.

1944 çулхи задачăсене пурнăçа кĕртес тесе, ССР Союзĕн Государство бюджетне доходсемпе расходсем енĕпе 245,6 миллиард тенкĕ чухлĕ палăртнă, çак хисеп 1943 çулхинчен 17,1 процент ытларах пулать.

Оборона валли укçа-тенкĕ парасси

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ лартнă задачăсене пурнăçласа пырса, пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăюллăн та татăклăн çĕмĕрсе пырать.

«Çĕнтерӳ çывăх ĕнтĕ,—тет Сталин юлташ,—анчах та ăна алла çавăрма илес тесен, çĕнĕрен вăйлă вăрçă ĕçĕ, пысăк тăрăшу кирлĕ...»

Гитлерла Германие хирĕç пыракан хальхи вăрçăра пирĕн çĕршывăн кăна мар, ирĕке юратакан мĕнпур халăхсен, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн кунçулĕ пирки ĕç татăлать. Тĕнче халиччен курман çак аслă та хаяр вăрçăн тĕп йывăрлăхне халĕ те-ха Совет Союзĕн халăхĕсем чăтса пыраççĕ.

Гитлерла Германие хăвартрах та пĕтĕмпех аркатса тăкас задача вăрçă валли нумайрах укçа-тенкĕ пама хушать. Çавна пула ССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕн проектĕнче Оборона Наркомачĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн Наркоматне 128,4 миллиард тенкĕ укçа-тенкĕ пама пăхнă.

Халăх хуçалăхне укçа-тенкĕ парасси

Халăх хуçалăхне государство бюджетĕнчен 44,7 миллиард тенкĕ укçа пама пăхнă, 1943 çулта çак хисеп 31,1 миллиард тенкĕ чухлĕ пулнă, çапла вара иртнĕ çулхинчен 43,7 процент ӳсет.

Пирĕн çĕршыв умĕнче тăракан задачăсене шута илсе, халăх хуçалăхĕн уйрăм отраслĕсене бюджетран çакăн чухлĕ укçа пама палăртнă: (миллиард тенкĕпе).

	1943 çулхи малтан шутланă тăрăх пурнăçланни	1944 çулхи бюджет	Ӳсĕм (процентпа)
Халăх хуçалăхне пĕтĕмпе	31,1	44,7	43,7
Вăл шутра:			
а) промышленность	15,1	24,7	63,6
б) ялхуçалăхне	4,7	7,2	53,2
в) транспортпа çыхăну	4,8	6,3	31,2
г) суту-илӳ тата хатĕрлевсем	0,8	1,2	50,0
д) коммунальнăй тата çурт хуçалăхне	1,1	1,7	54,5

Бюджет укçине ялхуçалăхне парасси çакăн пек чылай ӳстерни, чăн малтанах, Сталин юлташ каласа тăратнă чи кирлĕ задачăна—гитлерла аркатусăсем вăхăтлăха хуçаланса пурăннă районсенче ишĕлтерсе пĕтернĕ промышленноçа, транспорта, ялхуçалăхне тата коммунальнăй хуçалăха ура çине тăратас задачăна çыхăнса тăрать.

1944 çулта Донбаса, кăмрăкпа металлургие, чугун çул транспортне, колхозсене, совхозсене тата МТС-сене ура çине тăратас тĕлĕшпе нумай укçа пама палăртнă. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи хуçалăха ура çине тăратма 1944 çулта 16 миллиард тенкĕне яхăн расходлама палăртнă.

Халăх хуçалăхне паракан укçа-тенкĕ расходĕсем ӳсни, чăн малтан, капиталлă вложенисен пысăкăшĕ ӳснинчен килет. Капитальнăй строительствăна государство бюджетĕнчен 1944 çулта пĕтĕмпе 20.786 миллион тенкĕ пама пăхнă. Çакăн шутне капитальнăй строительство валли уйăракан амортизаци отчислениĕсем, хуçалăх организацийĕсен тупăшĕсем, çавăн пекех тата строительствăн шалти ресурсĕсем те кĕмеççĕ.

1944 çулта производство пысăкăшĕ ӳснĕ май хуçалăх организацийĕсен хăйсен оборотри укçи-тенкисене те 4,5 миллиард тенкĕ ӳстерме палăртнă, вăл шутра государство бюджетĕнчен 2 миллиард тенкĕлĕх ӳсет.

1944 çулта халăх хуçалăхне валли бюджетран паракан пысăк укçа-тенкĕ хывасси государство укçа-тенкине перекетлесе тăракан режима çирĕппĕн пурнăçлама хушать.

Капитальнăй ĕçсен пурнăçлани тата халăх хуçалăхне бюджетран паракан пысăк укçа-тенкĕне тĕрĕс усă курни Совет государствин вăрçă экономикине ...

Социаллă-культураллă мероприятисем валли укçа-тенкĕ парасси

1944 çулхи государство бюджечĕ пирĕн çĕршывра социаллă-культураллă строительствăн аслă программине пурнăçлама май парать. Социаллă-культураллă мероприятисем валли 1944 çулхи бюджет тăрăх 51,4 миллиард тенкĕ пама палăртнă, 1943 çулта çав ĕçсем валли 37,2 миллиард тенкĕ панă пулнă, урăхла каласан, çакă вăл 14,2 миллиард тенкĕ е 38,2 процент чухлĕ ӳсни пулать.

1944 çул вĕçленнĕ тĕле шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ çулталăк пуçланнă вăхăтринчен 4,2 миллион çын ытларах пулмалла. Шкулсемпе вĕренекенсен шучĕ ӳснисĕр пуçне, шкулсем валли паракан укçа-тенкĕ расхочĕсем пысăкланни 1943 çулхи августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа учительсен ĕç укçине ӳстернинчен те килет.

Хĕрарăмсене производствăна ытларах явăçтарса пынă май ача сачĕсен шутне ӳстерме тивет. 1943 çулăн вĕçĕнче ача сачĕсенче 1340 пин ача пулнă, 1944 çулта 1762 пин ача пулмалла, урăхла каласан, 422 пин ача ытларах пулать.

Совет государстви тăлăха тăрса юлнă ачасем валли, çавăн пекех тата паттăр Хĕрлĕ Çар ретĕнче кĕрешекенсен ачисем валли уçнă ачасен çурчĕсене анлăн сарса ячĕ. 1944 çулта ача çурчĕсен хисепне татах та ӳстерме пăхнă. Ачасен çурчĕсене тытса тăма 1944 çулта 1,7 миллиард тенкĕ укçа пама палăртнă, 1943 çулта çак ĕç валли 0,9 миллион тенкĕ панă пулнă.

Аслă тата вăтам квалификациллĕ специалистсене хатĕрлес ĕçе укçа-тенкĕ парассине нумай ӳстерме пăхнă.

Халăх хуçалăхĕ валли кирлĕ квалификациллĕ ĕç вăйĕ хатĕрлес ĕç валли тухакан расходсем бюджетра паха вырăн йышăнаççĕ. Ремесла тата чугун çул училищисен хисепĕ 1944 çулта 20 процент ытла ӳсет, ФЗО шкулĕсен шучĕ вара—30 процент ӳсет.

Наукăпа тĕпчев учрежденийĕсем валли 1944 çулта тухакан расходсем 1,3 миллиард тенкĕ чухлĕ пулаççĕ.

1944 çулхи государство бюджечĕ тăрăх сывлăха сыхлас ĕç валли 10,4 миллиард тенкĕ уйăрнă, 1943 çулта çак ĕç валли пурĕ 8,4 миллиард тенкĕ расходлана пулнă, çакă вăл 2 миллиард тенкĕ е 23,8 процент чухлĕ ӳсни пулать.

Социальнăй обеспечени валли тухакан расходсем 1943 çулхи 12,4 миллиард тенкĕрен 1944 çулта 15,4 миллиард тенке çити ӳсеççĕ, урăхла каласан, çакă вăл 3 миллиард тенкĕ е 24,2 процент чухлĕ ӳсни пулать. Çакă вăл, пуринчен ытларах, çар çыннисене тата вĕсен çемьисене пенсипе пособисем парасси ӳснипе çыхăнса тăрать. Çар çыннисен çемьисене пулăшу панипе пĕрлех, налогсем, хваттер укçисем тата вĕсен ачисем шкулсенче, техникумсенче, аслă шкулсенче вĕреннĕшĕн илес укçа-тенкĕсем тĕлĕшпе те нумай çăмăллăхсем панă.

Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисемшĕн куллен тăрăшас ĕç государство пенсийĕпе пособине тата тĕрлĕ çăмăллăхсем панипе кăна чарăнса тăмасть. Çар çыннисен çемьисене государство енчен пулăшса тăма тата ĕçе вырнаçтарса пыма правительство республикăсенче тата вырăнсенче ятарласах уйрăм органсем турĕ. Çапла туни вара ку ĕç государствăн пысăк ĕçĕ пулса тăнине тепĕр хут паллă туни пулать.

Социаллă-культураллă мероприятисем валли бюджет тăрăх пăхнă укçа-тенкĕн чылай пысăк пайĕ нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи культураллă учрежденисене йĕркелесе яма çĕре каять.

1944 çулта хуçалăха юсаса ура çине тăратмалли ĕçсен пысăкăшĕ татах та ӳсет. Çак çул вĕçленнĕ тĕле фашистла оккупацирен ирĕке кăларнă облаçсенчи шкулсем 4,3 миллион вĕренекене явăçтармалла, 86 аслă шкулпа 312 техникум, 79 театр тата 1372 киноустановка, культураллă çутĕç, наука учрежденийĕсем, сывлăха юсамалли учрежденисем çĕршерĕн те пиншерĕн ĕçleме тытăнмалла. Оккупацирен ирĕке кăларнă Украинăпа Белорусси облаçĕсенче çутта кăларас ĕç валли бюджетран тухакан расходсен пĕтĕм хисепĕ 1944 çулта 3,2 миллиард тенкĕ, сывлăха сыхлас ĕçе каякан расходсем—1,4 миллиард тенкĕ чухлĕ пулаççĕ.

Управлени расхочĕсем

1944 çулта государство органĕсен управленине тытса усрама 6,7 миллиард тенкĕ расходлама палăртнă, вăл хисепрен союзлă бюджет тăрăх 2,3 миллиард тенкĕ тата союзлă республикăсен бюджечĕсем тăрăх 4,4 миллиард тенкĕ расходлама палăртнă. Государство аппарачĕн управленине тытса усранă çĕре расходлама палăртнă укçа-тенкĕ хисепĕ, 1943 çулхипе танлаштарсан, 1,5 миллиард тенкĕ ытларах шутланать. Управление тытса тăма каякан укçа-тенкĕрен пĕр миллиард тенкĕ ытларах нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи аппарата тытса тăна çĕре каять.

Государство предприятийĕсемпе организацисен пурлăхĕ ӳссе пыни

1944 çулта та, иртнĕ çулсенчи пекех, вăрçă расхочĕсене витме тата халăх хуçалăхне аталантарма, социаллă-культураллă мероприятисене пурнăçа кĕртме каякан укçа-тенкĕсен çăлкуçĕ—государствăн предприятийĕсемпе организацийĕсен доходĕсем пулса тăраççĕ.

Оборотран пухмалли налог 80,2 миллиард тенкĕлĕх пулмалла, урăхла каласан, вăл 1943 çулхинчен 9,1 миллиард тенкĕ ытларах шутланать. Государство бюджетне тупăшсенчен 23 миллиард тенкĕ кĕмелле, урăхла каласан, бюджета тĕрлĕ тупăшсенчен кĕрекен укçа хисепĕ 3,1 миллиард тенкĕ ӳсмелле. Тупăшсенчен кĕрекен укçа-тенкĕ хисепĕ ӳсесси промышленность производствине вăйлатса пырас тата халăх хуçалăхĕн отраслĕсенче пурлăхсене ӳстерес енĕпе пулса пымалла.

Промышленность продукцине кăларассине ӳстермелли татăклă условие вăл ĕç тухăçлăхне малалла ӳстерсе пынинче пулать.

Промышленность ĕçĕнче иртнĕ çулта тунă ӳсĕмсем кăçал промышленноçăн пур отраслĕсенче те производствăна малалла аталантарса пымалли тĕп майсене туса параççĕ. Куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕç те чылаях ӳсмелле.

Промышленность туса кăларакан продукцие ӳстерес тĕлĕшпе вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕнче пысăк майсем пур.

Бюджетпа пăхнă тупăшсенчен укçа уйăрса памалли плансене пурнăçа кĕртесси государство предприятийĕсемпе организацийĕсем хăйсен пурлăхне ӳстерсе пымалли плана пурнăçланинчен килет.

1944 çулта государство предприятийĕсемпе организацийĕсем илекен тупăш 27,3 миллиард тенкĕ пулмалла. 1943 çулта вăл тупăш 21,7 миллиард тенкĕ пулнă. Çапла вара тупăшсен хисепĕ кăçал 5,6 миллиард тенкĕ ӳсмелле. Уйрăмăн илсен, тупăшсем промышленность енĕпе 11,8 миллиардран 15 миллиард тенкĕне çитĕ, транспорт тата çыхăну енĕпе 5,3 миллиардран 7,6 миллиард тенкĕне çити ӳсмелле.

Тупăшсем илес плана ăнăçлăн тултарас тесен, хуçалăх организацийĕсен руководителĕсен производство планĕсене хисеп тата пахалăх тĕлĕшпе те пурнăçа кĕртессишĕн, перекетлĕх режимне çирĕппĕн пăхăнса тăрассишĕн кĕрешĕве вăйлатса пымалла.

Пирĕн халăх мирлĕ вăхăтри çулсенче те материалсемпе финанс ресурсĕсене перекетлĕн тыткаласси çине тимлĕн çавăрăнса пăхнă пулсан, хальхи условисенче, вăрçă пула пысăк расходсем тӳснĕ талхăрта, перекетлĕх режимне çирĕппĕн пăхăнассишĕн кĕрешесси питех те кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Халăх хуçалăхĕн отраслĕсенче перекетлĕх режимне пурнăçа кĕртес ĕçре усă курман пысăк майсем тата пурлăхсене ӳстерсе пыма та нумай паха майсем пур. Анчах предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен руководителĕсем çавна пурте ăнланса илмен-ха. Материалсем ытлашши расходлакан, производствăшăн усăсăр расходсем тăвакан, пахалăхсăр продукци кăларакан предприятисем те чылай-ха.

Перекетлĕх режимне пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнĕ çĕрте предприятисенче учетпа отчет ĕçне тĕрĕс йĕркелени паллă вырăн йышăнса тăрать.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII-мĕш конференцийĕн решенийĕсенче предприятисене учет ĕçне тĕрĕс йĕркелемесĕр ертсе пыма çук тесе уйрăмăн кăтартса панăччĕ. Учет ĕçне япăхтарни директора предприятири ресурссемпе тĕрĕс те пĕтĕмпех усă курма тата производствăна йĕркеллĕн ĕçлеттерме чăрмантарать.

Апла пулин те пирĕн предприятисен нумай руководителĕсем учетпа отчет ĕçĕ япăххине тата учет ĕçĕ кая юлса пынипе килĕшсе тăраççĕ.

Халăхран укçа-тенкĕ пухăнни

Государство бюджетĕнчи доходсен çăлкуçĕсенчен пĕри вăл халăхран укçа-тенкĕ пухăнни пулать. Государствăн вăрçă расхочĕсем ӳссе пыни тата халăх хуçалăхне аталантарнă çĕре укçа-тенкĕ хывассине ӳстерме кирли халăхран илекен тӳлевсен пĕлтерĕшне татах та çĕклерĕç.

ССР Союзĕн 1944 çулхи государство бюджечĕн проекчĕ тăрăх, государство налогĕсем енĕпе халăхран 34,3 миллиард тенкĕ укçа пухма палăртнă. Çак доходсене тĕрĕс пухасси государство ĕçĕнче паллă вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен вăл ĕç хулари тата ялти ĕççыннисен анлă массисен интересĕсемпе çыхăнса тăрать. Уйрăмăн илсен, налогсем тӳлевĕсенчен хăтарас йĕркене çирĕппĕн пăхăнса пыни, пуринчен ытла çар çыннисен çемьисемпе отечественнăй вăрçă инвалидĕсене льготăсем тĕрĕс парса тăни кирлĕ вырăн йышăнса тăрать. Акă мĕншĕн йĕнтĕ налог пухнă чухне финанс аппарачĕсен питех те тикĕс ĕçлемелле. Çак ĕç çине ĕççынни депутачĕсен вырăнти совечĕсен тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Бюджетри доходсенче государство заемĕсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Государство заемĕсем ăнăçлăн саралнинче совет патриотизмĕ яр-уççăн палăрса тăрать.

1944 çулта государство заемĕсем сарнинчен бюджета 30,3 миллиард тенкĕ укçа пырса кĕмелле, вăл шутра халăх хушшинче заемсем сарнинчен — 21,7 миллиард тенкĕ, колхозсемпе промысла артелĕсем хушшинче заемсем сарнинчен — 2,1 миллиард тенкĕ, перекет кассисем уйрăм фондсем шучĕпе заемсем туяннинчен—4 миллиард тенкĕ пухма палăртнă.

Республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсем

1944 çулта республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсем 36 миллиард тенкĕлĕх пулмалла. Ку хисеп, 1943 çулхипе танлаштарсан, 10,6 миллиард тенкĕ ытларах, е 41,6 процент ытларах шутланать.

Хăшпĕр союзлă республикăсем тăрăх илсен, çав бюджетсем çакăн чухлĕ пулмалла (миллион тенкĕпе):

Союзлă республикăсем	Малтан шутланă тăрăх, 1943 çулхи бюджета пурнăçа кĕртнĕ	1944 çулхи бюджет	Ӳсĕм (1943 çулхипе танлаштарсан)
РСФСР	18.775	24.266	5.491
Украина ССР-ĕ	601	3.470	2.869
Белорусси ССР-ĕ	—	429	429
Азербайджан ССР-ĕ	807	1.012	205
Грузи ССР-ĕ	964	1.175	211
Армян ССР-ĕ	404	536	132
Туркмен ССР-ĕ	331	456	125
Узбек ССР-ĕ	1.409	1.877	468
Таджик ССР-ĕ	408	532	124
Казах ССР-ĕ	1.278	1.640	362
Киргиз ССР-ĕ	362	487	125
Карело-Финн ССР-ĕ	79	124	45
Пĕтĕмпе	25.418	36.004	10.586

Союзлă республикăсен бюджечĕсем енĕпе пулакан пĕтĕм расходсен 71,1 проценчĕ чухлĕ, урăхла каласан, 25,6 миллиард тенкĕ социаллă-культураллă мероприятисене ирттернĕ çĕре каять. Социаллă-культураллă мероприятисене ирттернĕ çĕре каякан расходсен хисепĕ, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, 7,6 миллиард тенкĕ е 42,1 процент чухлĕ ытларах шутланать. Уйрăмăнах халăха çутта кăларас ĕçе каякан расходсем нумай ӳсеççĕ, вăл ĕçе 8,3 миллиард тенкĕ кайнă пулсан, кăçал вара 13,7 миллиард тенкĕ расходлама палăртнă; урăхла каласан, 66,2 процент чухлĕ ытларах. Сывлăха сыхлас ĕçе каякан расходсен хисепĕ 7,5 миллиард тенкĕрен 9,2 миллиард тенке çити, урăхла каласан, 22,3 процент чухлĕ ӳсмелле.

Союзлă республикăсен бюджечĕсенчен халăх хуçалăхне 5,1 миллиард тенкĕ пама палăртнă. Халăх хуçалăхне каякан укçа-тенкĕ хисепĕ 1943 çулхинчен 1,7 миллиард тенкĕ е 47,5 процент чухлĕ ытларах шутланать. Çак хисепрен промышленноçа 1,3 миллиард тенкĕ, ялхуçалăхне 1,5 миллиард тенкĕ, коммуналлă хуçалăха 1,7 миллиард тенкĕ памалла.

1944 çулта республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсенчен капитальнăй строительствăна 1535 миллион тенкĕ хывмалла. 1943 çулта капитальнăй строительствăна 377 миллион тенкĕ хывнă. Капитальнăй строительство валли хывнă укçа-тенкĕрен 523 миллион тенкине промышленность валли, 552 миллион тенкине коммуналлă хуçалăх валли тата 193 миллион тенкине ялхуçалăх валли памалла.

Нимĕç захватчикĕсем вăхăтлăха хуçаланса пурăннă районсенчи ишĕлтернĕ хуçалăха тата культураллă учрежденисене юсаса йĕркеленĕ çĕре укçа-тенкĕ нумай хывма палăртнă.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче, вырăнти хуçалăхсем аталаннă май, союзлă республикăсен бюджечĕсен вырăнти дохочĕсем те ӳсрĕç. 1944 çулта вăл доходсем пĕтĕм союзлă республикăсем тăрăх 15,3 миллиард тенкĕ пулмалла, 1943 çулта вĕсем 12,4 миллиард тенкĕ пулнă, çапла вара вĕсем 23,3 процент ӳсеççĕ, союзлă республикăсен бюджечĕсен мĕнпур дохочĕсен 42,5 проценчĕ чухлĕ пулса тăраççĕ. Нимĕç оккупанчĕсем Украина ССР-ĕн хуçалăхне юхăнтарнă пирки, Украина ССР-ĕн хăйĕн тупăшĕсем расходсен 14,4 процентне çеç, Белорусси ССР-ĕн—расходсен 6,3 процентне çеç витеççĕ. Çавăнпа çав союзлă республикăсен бюджетне, пĕтĕм союзлă тупăшсенчен уйăрса панисĕр пуçне, союзлă бюджетран çакăн чухлĕ хушса пама палăртнă: Украина ССР-ĕн бюджетне — 1.019 миллион тенкĕ, Белорусси ССР-ĕн бюджетне — 327 миллион тенкĕ.

Республикăсен бюджечĕсемпе вырăнти бюджетсене тупăшсем пĕр тикĕс кĕрсе тăччăр тесе тата çав бюджетсем пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнса тăччăр тесе, пĕтĕм Союзăн налогĕсемпе тупăшĕсенчен республикăсен бюджечĕсемпе вырăнти бюджетсене уйăрса паракан пайĕн пысăкăшне кăшт улăштарма палăртнă. Çапла, çыраннă тăрăх вырнаçтаракан государство заемĕсенчен 1943 çулта 25 процент уйăрса панă пулсан, 1944 çулта 15 процент уйăрса пама палăртнă, халăхран тупăш тăрăх пухакан налогран уйăрса паракан пай 10 процент таран чакать. Армян ССР-не, Таджик ССР-не тата Карело-Финн ССР-не çеç ăна ĕлĕкхи чухлĕ уйăрса памалла. Налогпа оборотран союзлă республикăсен бюджетне уйăрса паракан пай пысăкланать.

* * *

Депутат юлташсем! Çирĕплетме тăратнă государство бюджечĕ пирĕн çĕршыв умне 1944 çулта лартнă тĕп задачăсене палăртса тăрать. Бюджета ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен мĕнпур учрежденисемпе хуçалăх организацийĕсен хăйсен бюджет умĕнчи обязательствисене лайăх пурнăçа кĕртсе пымалла тата укçана перекетлĕн расходламалла.

Тăшмана тĕппипех аркатса тăкмашкăн совет халăхĕ хăйĕн Хĕрлĕ Çарне тата ытларах пулăшĕ, мĕнпур ресурссене, Совет государствин пĕтĕм хăватне мобилизацилĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç туса пыракан хăйĕн Отечественнăй тĕрĕс вăрçинче Совет Союзĕнчи халăхсем, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ аслă Сталин ертсе пынипе, тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерĕç. (**Тăваллăн ала çупаççĕ**).

Совет Украинин правительстви Киев хулинче

Советлă Социализмлă Украина Республикин столицине—Киев хулине—нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă май тата Хĕрлĕ Çар Хĕвеланăçнелле ăнăçлăн куçса пынă май, Советлă Социализмлă Украина Республикин Верховный Совечĕн Президиумĕ, УССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата Украинăри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ правительствăн тата партин тĕп учрежденийĕсемпе пĕрле Киев хулине куçнă, халĕ вĕсем пурте унта ĕçлеççĕ. (ТАСС).

Пĕлтерӳ

Январĕн 31-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче пропагандистсем, кружоксемпе юлташла тĕл пулса калаçас ĕçĕн руководителĕсем валли Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Аслă отечественнăй вăрçи» ятлă кĕнеки тăрăх **«Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн 1943 çулхи майăн 1-мĕшĕнчи 195-мĕш № приказĕ»** ятлă 7-мĕш темăпа семинар пулса иртет.

Семинара **З. А. Купер** юлташ ирттерет.

ВКП(б) Горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 324 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз